**Адрес:**
**Чăваш Республики,**
**Муркаш районĕ,**
**Муркаш сали,**
**Хĕрлĕ тӳрем, 5**

**Телефон**
**(8 83541) 62-6-36**

**Ĕç вăхăчĕ :**
**8:00 - 18:00**
**Шăмат кун 8:00 - 17:00**
**Вырсарни кун - канмалли кун**



**Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека**



# *Вышкайсăр пысăк, пархатарлă ят: Н. В. Никольский*

**Муркаш сали**
**2018**

Редакционный совет:
И. В. Николаева
А. А. Боярина
Л. В. Иванова

Вышкайсăр пысăк, пархатарлă ят: Н. В. Никольский : информаци брошюри / Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека . - Муркаш, 2018. - 12 с.

Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн
ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека

**Никифорова, Л.** Чăваш улăпĕ : чăвашсен пĕрремĕш хаçачĕ «Хыпар» тухма пуçланăранпа 100 çул çитнине тата унăн пĕрремĕш редакторне Н. В. Никольский профессора халаллана литературăпа музыка композицийĕ (7–9–мĕш классем валли) / Л. Никифорова // Халăх шкулĕ = Нар. шк. – 2005. – № 4. – С. 61–62.

**Н. В. Никольский** и чувашская гуманитарная наука XX века : материалы конф., посвящ. 125–летию со дня рожд. ученого : [сб. ст.] / [коллектив авт.] ; Чуваш. гос. ин–т гуманит. наук. – Юбил. изд. – Чебоксары : ЧГИГН, 2005. – 267 с.: портр., фот.

**Петров, К.** Никольскипе паллашни : [аса илӳ] / К. Петров // Хыпар. – 2005. – 8 авăн.

**Петров, К. К.** «Хыпар» никĕслевçи : «Хыпар» кĕнеки / К. К. Петров ; худож. О. Улангин ; фоторепрод. Г. Верблюдовăн. – Шупашкар, 1996. – 96 с.

**Петров, К.** Чăваш пичетне, чăваш журналистикине малалла аталантарассишĕн / К. Петров // Хыпар. – 2006. – 17 кăрлач. – С. 2.

**Портнов, К. П.** Просветительская и педагогическая деятельность Н. В. Никольского : [моногр.] / К. П. Портнов. – Чебоксары : Чуваш. мир, 2008. – 182 с.

**Проблемы изучения** научного наследия Н. В. Никольского : материалы конф., посвящ. 120-летию со дня рождения (17-19 мая 1998 г., Казань, Чебоксары, д. Юрмекейкино / коллектив авт.; Чуваш. гос. ин-т гуманит. наук ; Чуваш. гос. ин-т гуманит. наук. – Чебоксары : ЧГИГН, 2002. – 304 с.

**Рукописный фонд** Н. В. Никольского. Путеводитель : (науч. архив Чуваш. гос. ин–та гуманит. наук) / Чуваш. гос. ин–т гуманит. наук ; [сост. Г. А. Александров ; науч. ред. Е. П. Погодин]. – Чебоксары : ЧГИГН, 2005. – 400 с.

**Станьял, В.** Профессорăн 272–мĕш саламĕ / В. Станьял // Хыпар. – 2006. – 13 кăрлач.

**Студенцов, О. Р.** Православная религиозная лексика в кратком чувашско-русском словаре Н. В. Никольского 1919 г. (выявление фактического материала) / О. Р. Студенцов // Международная научная конференция «Чувашский язык и современные проблемы алтаистики» (27-28 февр. 2009 г.) = The international scientific conference «Chuvash language and modern problems of altaic linguistics» (Februaru 27-28, 2009). – [Чебоксары], 2009. – Ч. 2. – С. 133-136.

**Хлебникова, В. Г.** Н. В. Никольский и просвещение чувашского народа / В. Г. Хлебникова // Чăваш чĕлхипе литератури : теори тата методика. – Шупашкар, 2009. – 8 -мĕш кăларăм. – С. 57-63.

**«Хыпар»** – чăвашсен пĕрремĕш хаçачĕ : Н. В. Никольскин аса илĕвĕ тата ăна ăнлантарса пани = «Хыпар» – первая чувашская газета : воспоминания Н. В. Никольского и коммент. / пухса хатĕрлекенĕ тата ăнлантарусене çыраканĕ А. П. Леонтьев. – Шупашкар : «Хыпар» кĕнеки, 2006. – 79 с. : ил., портр. – Текст парал. чуваш., рус. – Библиографи: с. 42, 78.

**Юмарт, Г.** Н. Никольский тата чăваш литератури / Г. Юмарт // Хыпар. – 2005. – 19 çу. – С. 4-5. – («Хыпар» кĕнеки).



## Библиографи:


**Артемьев, Ю. М.** О нравственном облике ученого // Артемьев, Ю. М. Страсть к полемике / Ю. Артемьев. – Чебоксары, 2003. – С. 89–91.

**Васильева, И. Н.** Научная деятельность Н. В. Никольского / И. Н. Васильев, Т. С. Сергеев // На рубеже веков : итоги и перспективы. – Чебоксары, 2000. – С. 12–13.

**Васильев-Бурзуй, Е. В.** Две встречи с Никольским / Е. В. Васильев-Бурзуй // КИЛ. – 2011. – 9-10 (№ 1/2). – С. 228-229.

**Григорьева, Н. А.** Н. В. Никольский – чувашский ученый и просветитель / Н. А. Григорьева // Год духовного просвещения : сб. ст. – Чебоксары, 2006. – С. 150-153.

**Димитриев, В. Д.** Н. В. Никольский – ученый, педагог, общественный деятель : учеб. пособ. / В. Д. Димитриев. – Чебоксары : Изд–во ЧГУ, 2002. – 102 с. : портр. – Библиогр. : с. 79–102.

**Димитриев, В. Д.** Н. В. Никольский – ученый, просветитель, общественный деятель / В. Д. Димитриев, А. П. Леонтьев, Г. Б. Матвеев ; [редкол.: Р. М. Лизакова и др.]. – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во, 2011. – 302, [1] с.

**Димитриев, В. Д.** Н. В. Никольский – чувашский ученый, просветитель, общественный деятель / В. Д. Димитриев ; под ред. В. Д. Данилова и В. П. Иванова. – Чебоксары, 1993. – 70 с.

**Краснов, Н. Г.** Никольский Николай Васильевич / Н. Г. Никольский // Краткая чувашская энциклопедия. – Чебоксары, 2001. – С. 296.

**Культурные традиции** в условиях трансформации общества : материалы науч.-практ. конф., посвящ. 130-летию со дня рождения Н. В. Никольского / Чуваш. гос. ин-т гуманит. наук ; [науч. ред. Г. Б. Матвеев]. – Чебоксары : ЧГИГН, 2011. – 247 с.

**Леонтьев, А. П.** Килех, профессор! : Н. В. Никольский çуралнăранпа 125 çул çитнине уявланă тапхăрти кулянуллă та хавхалануллă шухăшĕсем / А. П. Леонтьев. – Шупашкар, 2003. – 95 с. : портр.

**Леонтьев, А.** Провозвестник чувашской печати : к 100–летию первой национальной газеты / А. Леонтьев // Лик. – 2005. – № 4. – С. 86–154 ; 2006. – № 5. – С. 66-155.

**Матвеева, Н. В.** Диалектологические исследования Н. В. Никольского / Н. В. Матвеева // Чувашский язык: история, современность, проблемы. – Чебоксары, 2009. – С. 109-112.

**Матвеева, Н. В.** Лексикографическое наследие Н. В. Никольского : моногр. / Н. В. Матвеева. – Чебоксары : ЧГПУ, 2009. – 110 с.

**Матвеева, Н. В.** Лексикографическое наследие Н. В. Никольского для словаря агнонимов чувашского языка / Н. В. Матвеева // Международная научная конференция «Чувашский язык и современные проблемы алтаистики» (27-28 февр. 2009 г.) = The international scientific conference «Chuvash language and modern problems of altaic linguistics» (Februaru 27-28, 2009). – [Чебоксары] : [ЧГИГН], 2009. – Ч. 2. – С. 17-19. [ЧГИГН], 2009. – Ч. 2. – С. 17-19.

**Матвеева, Н. В.** Н. В. Никольский – языковед / Н. В. Матвеева // Чăваш чĕлхипе литератури : теория тата методика. – Шупашкар, 2006. – С. 71-75.

**Матвеева, Н. В.** Обзор диалектологических работ из рукописного фонда Н. В. Никольского / Н. В. Матвеева // Вестн. Чуваш. ун-та. Гуманит. науки. – 2008. – № 1. – С. 192-194.


## Ум сăмах

Николай Васильевич Никольский - чăваш халăхĕн историпе этнографине, фольклорпе чĕлхине тĕпченĕ паллă ученăй. Николай Никольский чăвашла чи малтанхи хаçата «Хыпара» никĕсленипех ĕмĕр-ĕмĕр халăх асĕнче юлĕ. Çав вăхăтрах вăл чăваш халăхне пур енлĕн тĕпчекен ăслăлăхсен пуçаруçи, никĕслевçи.

Кам вăл – Никольский? Никольский – историк, этнограф, лексикограф, словарь çыраканĕ, фольклорист, музыка тĕпчевçи, чĕлхеçĕ, педагог, çутта кăларакан, журналист, куçаруçă, тавра пĕлӳçĕ, статистик, халăх медицин тĕпчевçи, хальхи чăваш литература чĕлхин никĕслевçисенчен пĕри.

Чăваш халăхĕн йышне, вăл мĕнле пулса кайнине, мĕнле вырнаçнине, ытти халăхсемпе еплерех хутшăнса пурăннине, халăхăн пурлăхпа ăс-хакăл культурине, йăли-йĕркисене тĕпчекенĕ пулнă. Николай Васильевич чăваш этнографине ăслăлăх никĕсĕ çине куçарнă, кăмăл турамĕпе кăсăклăх шайĕнчи çырса илӳ-пуçтару этнографийĕнчен чăн-чăн ăслăлăх этногарфийĕ туса хунă. Пĕтĕмĕшле ăслăлăх иерархинче этногафи истори ăслăлăхĕн пĕр пайĕ. Кашни историк – этнограф мар, кашни археолог та этнограф пулаймасть. Никольский историк те, хăй вăхăтĕнче пĕтĕм Раççĕйĕпе чăн-чăн ят-сум илнĕ этнограф та. Чăвашсен хушшинче христианлăх сарăлнине тĕпчесе çырнă ĕçшĕн богослови степеньне илме тивĕçлĕ пулнă. Чăваш халăхне çутта кăларас, наци кадрĕсем хатĕрлес ĕçре пирĕн икĕ улăп – Яковлев тата Никольский пулнă.

Никольский – педагог, çутта кăларакан. Пур педагог та шкул е аслă шкул уçаймасть, харăсах тĕрлĕ ăслăлăхпа специалистсем хатĕрлеймест. Вăл пĕр вăхăтрах чаплă педагог та, вĕрентӳ ĕçĕн йĕркелӳçи те, фольклорист та. Чăваш чĕлхин, историйĕн, этнографийĕн, ытти ăслăхĕсен вĕрентӳ дисциплинисен тата вĕрентӳ программисемпе кĕнекесен авторĕ, çăк ĕçсене çыракан малтанхи профессионалĕ.

## Н.В. Никольский ӗҫӗ-хӗлӗ

Николай Васильевич Никольский /1878-1961/ - чӑваш халӑхӗн историпе этнографине, фольклорпе чӗлхине тӗпченӗ паллӑ ученӑй. Вӑл пирӗн районти Купарля ялӗнче мишавай килйышӗнче ҫуралса ӳснӗ. Малтан вӑл Шӑматри земство училищинче, ун хыҫҫӑн Шупашкарти духовнӑй училищӗре, кайран Хусанти семинарире вӗреннӗ. 1899 ҫулта, семинарирен вӗренсе тухсан, пулас тӗпчевҫӗ Хусанти духовнӑй академие вӗренме кӗрет, ҫав хушӑрах университета чӗлхепе литература, историпе этнографи лекцийӗсене итлеме ҫӳрет, хӑйӗн пӗлӗвне тарӑнлатать.

1903 ҫулта пирӗн ентеш духовнай академирен вӗренсе тухать те унтах чӑваш чӗлхи вӗрентме тытӑнать. 1906-1910 ҫулсенче Н.В. Никольский Хусанти учительсен семинарийӗнче преподаватель пулса ӗҫленӗ, ҫак тапхӑрта вӑл чӑваш халӑхӗн историйӗпе йӑли-йӗркине тӗпчеме материал пухнӑ, наука ӗҫне тытӑннӑ. Унӑн малтанхи ӗҫӗ «Родной язык как орудие просвещения инородцев» ятпа 1904 ҫулта пичетленсе тухнӑ, 1910 ҫулта вара вӑл «Народное образование у чуваш» ятлӑ пысӑк ӗҫ пичетлесе кӑларать. Кунта автор XVI - XVIII ӗм. чӑвашсене ҫутта кӑларас ӗҫ мӗнле аталанса пынине ӗнентермелле ҫырса кӑтартнӑ.

Н.В. Никольский – чӑвашсен чи первайхи хаҫатне («Хыпар») йӗркелесе яраканӗ тата кӑлараканӗ /1906 ҫ./

Раҫҫейре вун саккӑрмӗш ӗмӗрччен нимӗнле хаҫат та пулман. Перремӗш Петӗр патша пуҫарнипе 1702 ҫулта «Ведомости» кӑларма пуҫланӑ. Каярахпа тӗп хуларан инҫетри вырӑнсенче те кунсерен, эрнесерен, уйӑхсерен тухса тӑракан хаҫат-журнал ҫуралнӑ. Хусанта пӗрремӗш хаҫат 1811ҫулхи акан 19-мӗшӗнче кун ҫути курнӑ.

Чӑваш журналистики те, тӑван халӑхӑн пӗрремӗш хаҫачӗ Хусанта ҫуралнӑ. 1905 ҫулхи декабрь пуҫламашӗнче Хусанти духовнӑй семинари преподавателӗ Н.В. Никольский чӑваш чӗлхипе эрненре пӗрре «Хыпарсем» ятлӑ хаҫат кӑларма ирӗк ыйтса кӗпӗрнаттӑра ҫыру ярать. Пӗр виҫӗ кунтанах: «Хаҫат

## Библиографи (ӗҫӗсем):


**Антонова, Зоя Серафимовна.** И. Я. Яковлев пултаруллӑхне шкулта вӗрентесси : [вӗренӳ пособийӗ] / З.С. Антонова, А.Л. Ефимова. - Шупашкар : Чӑв. патш. педагогика ун-чӗн изд-ви, 2005. - 68 с. - (Учитель библиотеки).

**Аслӑ вӗрентекенӗмӗр** : (И. Я. Яковлев ҫуралнӑранпа 150 ҫул ҫитнӗ май) / Чӑваш Респ. Наци биб-ки т. ытт. ; [В. М. Иванова т. ытт. пухса хатӗрленӗ ; И. В. Балкова кӑларӑмшӑн яваплӑ]. - Шупашкар : Чӑваш Республикин Наци библиотеки, 1998. - 33 с.

**Брагина-Янрал, Тамара Ивановна.** Просветитель : пурнӑҫӗ : [поэма И. Я. Яковлев ҫинчен] : 150 ҫул тултарнине хисеплесе / Тамара Брагина-Янрал, куҫараканӗ А. И. Семенов, ӳнерҫи Н. А. Алимасова. - Чебоксары : Б.и., 1998. - 16 с.

**Волков, Геннадий Никандрович.** И. Я. Яковлев - чӑваш халӑх педагогӗ / Г.Н. Волков. - Шупашкар : Чӑваш АССР гос-во изд-ви, 1959. - 68, [2] с. : портр.

**Никольский, Николай Васильевич.** Краткий конспект по этнографии чуваш [Текст] / Н. В. Никольский. - Казань, 1919. - 103 с.

**Никольский, Н. В.** Конспект по грамматике чувашского языка / Н. В. Никольский. - Казань : Типо-литография Университета, 1919. - 16 с.

**Никольский, Николай Васильевич.** О пословицах чувашского народа [Текст] / Н. В. Никольский. - Чебоксары, 1958. - 24 с.

**Никольский, Николай Васильевич.** Конспект по истории народной музыки у народностей Поволжья [Текст] / Н. В. Никольский. - Казань, 1920. - 72 с.

**Никольский, Николай Васильевич.** Этнографические заметки о чувашах Козьмодемьянского уезда Казанской губернии [Текст] / Н. Никольский. - Казань, 1911. - 26 с.

**Никольский, Н. В.** Народная медицина у чуваш / Н. В. Никольский. - Чебоксары : Нар. ком. здравоохранения ЧАССР, 1929. - 61 с.

**Никольский, Н. В.** Юмахсем / Н. В. Никольский. - Шупашкар : Чӑваш государство изд-ви, 1960.- 168 с. - (Чувашские народные сказки).

**Никольский, Н. В.** Собрание сочинений : в 4-х т. / Н. В. Никольский ; Чуваш. гос. ин-т гуманит. наук ; [редкол. : В. С. Григорьев и др.]. - Чебоксары : Чувашское книжное издательство, 2004. - Т. 1 : Труды по этнографии и фольклору чувашского народа . - 526 с.

**Никольский, Н. В.** Собрание сочинений : в 4-х т. / Н. В. Никольский ; Чуваш. гос. ин-т гуманит. наук ; [редкол. : В. С. Григорьев и др.]. - Чебоксары : Чувашское книжное издательство, 2007. - Т. 2 : Туды по истории христианизации и христианского просвещения чувашей. – 447 с.

**Никольский, Н. В.** Собрание сочинений : в 4-х т. / Н. В. Никольский ; Чуваш. гос. ин-т гуманит. наук ; [редкол. : В. С. Григорьев и др.]. - Чебоксары : Чувашское книжное издательство, 2008. - Т. 3 : Труды по истории, культуре и статистике народов Волго-Уралья и Сибири. – 735 с.

**Никольский, Н. В.** Собрание сочинений : в 4-х т. / Н. В. Никольский ; Чуваш. гос. ин-т гуманит. наук ; [редкол. : В. С. Григорьев и др.]. - Чебоксары : Чувашское книжное издательство, 2009. - Т. 4 : Этнографические альбомы. – 317

**Н.В. Никольский сӑнарне асра хӑварни**



Шупашкар хулинчи Н.В. Никольский ячӗллӗ проспект.



Н.В. Никольский ячӗпе хисепленекен педагогика колледжӗ. Ӑна 1979 ҫулта уҫнӑ.



Н.В. Никольский ячӗпе хисепленекен музей - Муркашри тури чӑвашсен музейӗн филиалӗ. Муркаш районӗнчи Уйкас Янасал тӑрӑхӗнчи Сосновка ялӗнче вырнаҫнӑ.



Н.В. Никольский палӑкӗ Муркаш районӗнчи Уйкас Янасал тӑрӑхӗнчи Купӑрля ялӗнче вырнаҫнӑ.

кӑларма май ҫук», - тесе пӗлтереҫҫӗ. Никольский лӑпланмасть, каллех кӗпӗрнаттӑр патне «Хыпар ятлӑ» хаҫат кӑларма, унӑн редакторӗ пулма ирӗк ыйтса, ҫыру ярать, икӗ-виҫӗ кун иртсен хаҫат кӑларма ирӗк пареҫҫӗ. Николай Васильевич васкасах хаҫат валли хут шырама тытӑнать. Хусанти тӗп типографи хуҫипе «Хыпара» унта пичетлесси ҫинчен каласса татӑлать, почта экспедицийӗ урлӑ хаҫата мӗнле сармалли йӗркепе паллашать, чӑвашсем пурӑнакан вырӑнсене «Хыпара» ҫырӑнма ыйтса листовкӑсем ярса парать, хаҫата ҫулталӑк тӑршшӗпе илсе тӑрас текенсен Хусана виҫӗ тенкӗ куҫарса тӑмаллине пӗлтерет. Листовка кӑларма та, почта тӑкакӗсене саплаштарма та ӑна, паллах, никам та пӗр пус та паман, хӑй укҫине хывнӑ.

Хамӑрӑн тӑван халӑха чӑвашла хаҫат кирлине вӑл тахҫанах туйнӑ-ха. 1903 ҫулта Хусанта чӑвашла календарь – «Ҫулталӑк кӗнеки» - кӑларсан, уншӑн хӗпӗртесе ӳкнӗ чӑвашсем (календарь ҫийӗнчех 7000 экземпляр сарӑлнӑ) Никольские ӳкӗтлесе ҫыру ҫырма тытӑннӑ. «Хӑҫан хамӑр чӗлхепе хаҫат кӑларма тытӑнатӑр?» - тесе ыйтнӑ.

Ҫав вӑхӑтра Никольский духовнӑй семинари картишӗнчи пысӑк чул ҫуртра икӗ пӳлӗмлӗ хваттерте пурӑннӑ. 1905 ҫулхи октябрьте Чӗмпӗр чӑваш шкулне пӑрахса килнӗ Тимофей Семенова – Тайӑр Тимккине – хӑй патне кӗртнӗ вӑл, ӑна тӗп типографие ӗҫе вырнаҫма пулӑшнӑ. Хаҫат тухасси паллӑ пулсанах Никольский хушнипе Тимкка хӑйӗн тусӗсем патне ҫыру русем ҫырать. Ҫакӑн хыҫҫӑн Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнчен революцине хутшӑннӑшӑн кӑларса янӑ тата тепӗр икӗ ҫамрӑк персе ҫитет Никольский патне. «Сире укҫа тӳлемелле-ҫке, манӑн укҫа ҫук», - тет кусене редактор. «Пире хӑвӑр патӑрта ҫитерсе ҫеҫ усрӑр, эпир шалусӑр та ӗҫлеме килӗштепӗр», - теҫҫӗ лешсем, чӑвашла хаҫат кӑларма май килнишӗн савӑннӑскерсем.

«Хыпар» редакцийӗ Никольский хваттерӗнче пӗр пӳлӗме вырнаҫать. Ҫамрӑксем унтах хаҫатсем е тумтир саркаласа пӑрахса ҫывараҫҫӗ. Кӑнтӑрла ҫавӑнтах хавхаланса ӗҫлеҫҫӗ. Никольский каласса татӑлнӑ тӑрӑх, апат-ҫимӗҫ семинари столовӑйӗнчен илсе килсе тӑраҫҫӗ. Пурте кар тӑрса, хавхаланса ӗҫлесе, материалсене веҫех хатӗрлесе ҫитереҫҫӗ. Никольский

полосасене тимлесех вулать. Иккĕмĕш корректура хыççăн хаçата пичетлеме тытăнаççĕ. Вăл кăрлачăн 8-мĕш кунĕнче тухмалла (çĕнĕ стилпе кăрлачăн 21-мĕшĕнче). Акă пĕрремĕш номер хатĕр ĕнтĕ. Типографире ĕçлекенсем, редакци сотрудникĕсем хĕрсе кайсах хаçата адресатсене ярса пама хатĕрлеççĕ. Хăш-пĕр вырăна вуншар, теприсене çирĕмшер экземляр яма палăртаççĕ. Чăваш ялĕсене саланнипе пĕрлех «Хыпар» Мускавпа Питĕре чылай каять. Чикĕ леш енне ăсатма палăртнăниĕ уверситетсемпе наука академиĕсем, библиотекăсем хушшинче çакăн пек хуласене асăрхама пулать: Лондон, Париж, Рим, Лейпциг, Будапешт, София, Константинополь т. ыт. те.

«Паллă кун паян, - савăнать Никольский. – «Хыпар» хаçатăн пĕрремĕш номерĕ тухни чăваш халăхĕн пысăк уявĕ пек, культурăллă çĕнĕ пурнăçăн çуркунни евĕр туйăнчĕ маншăн». Унтан вăл сотрудникĕсене çакăн пек канаш парать: «Пирĕн пĕтĕм вăй-халран хаçата лайăх кăларма тăрăшмалла. Тумхахлă чĕлхепе çырнине хресчен юратсах каймĕ, тем аташать ку çын, теме пултарĕ. Ăслă статьясемпе паллашсан вара авторне мухтаса тăранаймĕ, вăт парать, вăт шăлать тесе çех хĕпĕртĕ.

1906 çулхи кăрлачран пуçласа 1907 çулхи çĕртме уйăхĕнччен «Хыпар» хаçат эрнере пĕрре, кашни вырсарни кун, 16 страницăпа тухса тăнă. Пурĕ 65 номер тухнă. Никольскисĕр пуçне редакцире Т. С. Семенов (Тайăр Тимккиĕ ), Михаил Акимов, Сергей Кириллов, Ефим Трофимов-Вир, Ф.Н. Николаев (Сергеев) тата ытти журналист та ĕçленĕ. Штатра тăман авторсем те тĕрлĕ çĕртен çырсах тăнă. Мал ĕмĕтлĕ чăваш корреспонденчĕсем ун чухнехи пурнăç «таппине» тĕрĕс кăтартса пама пултарнă. Куç умĕнчи çитменлĕхсене, тĕрĕсмарлăха тăрă шыв çине кăларнă, халăха ăнлантарса панă. Халăха çутта кăларас тĕлĕшпе хаçат малтанхи тапхăрта Çĕр чăмăрĕ, Хĕвел системи, çĕр çинчи пурнăç мĕнле пуçланса кайни çинчен çине-çинех статьясем пичетленĕ. Халăхсем хушшинчи туслăха çиреплетессишĕн тарăшнă.

Чăваш чĕлхине аталантарас тата вĕрентес тĕлĕшĕпе пирĕн мухтавлă ентеш 1970 çулта 640 страницăллă «Вырăсла-чăвашла словарь» хатĕрлесе пичетленĕ. Хăй вăхăчĕшĕн çак словарь шкул ачисене те, пысăккисене те чĕлхе вĕренме кирлĕ паха кĕнеке шутланнă, унпа нумай чăваш ачи чăваш тата вырăс чĕлхисене вĕреннĕ.

Н.В. Никольский – чăвашсем хушшинчен тухнă чи пирвайхи ученăй, наука докторĕ, профессор /1916 ç./ шутланать. 1915 -1929 çулсенче Хусанти университетра профессор пулса ĕçленĕ.

Пирĕн мухтавлă ентешĕмĕр наукăра революцичченех питех те тухăçлă ĕçленĕ : истори темипе вăл тĕрлĕ вăхăтра «Краткий конспект этнографии чуваш» /1911 ç./, «Христианство среди чуваш Среднего Поволжья в XVI - XVIII веках» /1912 ç./ кĕнекесем, тĕрлĕ статьясем пичетлесе кăларнă. Октябрь революцийĕ хыççăн Н.В. Никольский Хусанти тĕрлĕ шкулсенче тăван çĕршыв валли пысăк квалификациллĕ специалистсем хатĕрлес тĕлĕшĕпе вăй хунă, наукăра та унăн тӳпи пысăк. 1919-1920 çулсенче вăл истори темипе 7 кĕнеке пичетленĕ, çав шутра «Чăвашла –вырăсла словарь» пур. 1929 çулта ентешĕн икĕ кĕнеке – «Краткий курс этногафии чуваш» тата «Народная медицина у чуваш» пичетленсе тухать. Перремĕш кĕнекинче паллă тĕпчевçĕ чăваш халăхне тĕрлĕ енчен питĕ тĕплĕ çырса кăтартнă, ку кĕнеке хăйĕн пĕлтерĕшне халĕ те çухатман.

Пенсие тухсассăн та ватă тĕпчевçĕ наука ĕçне пăрахман: 1958 çулта вăл ваттисен сăмахĕсене тĕпчесе статья пичетлет, 1960 çулта унăн тепĕр кĕнеки – чăваш юмахĕсем – çапăнса тухать.

Пирĕн мухтавлă ентеш наука ĕçне ĕмĕр тăршшĕпех пархатарлă туса пынă. Унăн ăслăлăх еткерĕ пуян та нумай енлĕ. Пичетленсе тухнисемпе пĕрлех пичетленменнисем те нумай. Гуманитари ăслăлăхĕн институчĕн архивĕнче кăна вăл пухнă материалăн 250 томĕ упранать. Мĕн-мĕн çук-тăр кунта! Н.В. Никольскин чаплă та мухтавлă ĕçĕ чăваш халăх истринче ĕмĕрлĕхех çырăнса юлчĕ.